*П. Хусанкая асӑнса*

Поэт сӑваплӑ мрамор ӑшӗнче.
Кунтан ӑна курнать мӗнпур тӗнче.
Паян та вӑл сӑмах хӗсметӗнче,
Ӗмӗчӗпе ҫӳрет таҫта инҫе.

Куллен иртетӗп унӑн умӗпе.
Сисетӗп: кӑмӑлӗ ларман тӗпе.
Ҫанталӑк пултӑр типӗ е йӗпе –
Пурнать вӑл сӑнлӑхсен хӑвачӗпе.

Ҫапла шырать поэт сӑлтав, пирке…
Пире курса ырлать вӑл е тиркет.
Ҫырман поэмӑсем тӗркем-тӗркен
Урампала ҫӳреҫ ҫӗршер йӗркен.

Поэт паян сӑмах хӗсметӗнчех.
Ӗмӗчӗпе ҫӳрет ҫӗн ҫул ҫинче.
Кунтан ӑна курнать мӗнпур тӗнче,
Пурать вӑл ҫутӑ мрамор ӑшӗнче.

Аслӑ сӑвӑҫӑмӑрӑн сӑнарне Георгий Федоров символ шайне ҫитерме пултарнӑ. Хусанкай поэзийӗ уншӑн тӗнче культурин мӗн авалтан килекен хавалӗпе сывлать – Авалхи Греци, эллинизм хавалӗпе. Ҫавӑнпа ӗнтӗ Федоров поэтӑн вӑрттан шухӑшне, идейине асӑну хӑмин илем-сӑнар майӗ-меслечӗпе сӑнарлать. Хусанкай сӑнне виҫе канонлӑ культурӑна палӑртакан мраморта касса кӑларнӑ: поэт хӑйне мрамортан уйӑрмасть, вӑл унти шульӑшӑн пӗр сӑнӗ ҫеҫ – чӑваш сӑнӗ тейӗн. Е музыкҫӑсен

чĕлхинчи фермата – мраморти сăваплă кĕвĕн вилĕмсĕр тăсăмĕ. Хусанкайăн пултару хевтине вилĕм те хуплаймасть, ку сăвă авторĕн чун сисĕмĕ çакна калать: «Çырман поэмăсем тĕркен-тĕркен Урампала çўреç çĕршер йĕркен». Сăвă пĕрешкел рифмăсем патне туртăннин сăлтавĕ те çавăнтах – Хусанкайăн пĕр рифмăпа çырнă «Сапка юррийĕпе» çыхăнса вăл хальхи тата килес поэтсем Хусанкайăн пехилне туйни пирки систерет.

Юрий Яковлев.